Алга А. Константин Иванов палăкĕ умĕнче: [сăвă] / Александр Алка // Ялав. – 1955. - № 5. – С. 14.

# Константин Иванов палăкĕ умĕнче

*Александр АЛГА*

Эп тарăн шухăша кайса тăратăп
Çак мрамор палăк умĕнче ялан.
Чăвашăн иртнĕ ĕмĕрне куратăп,
Унта вĕçсе çитсе ăсăмпалан.

Унта — чуна тӳсме хĕн йывăр пусмăр,
Чăн Çын ылханнă ирсĕр самана.
Поэт каланă: пуçăра тек усмăр,
Этем час курĕ ирĕклĕ Куна.

Поэт! Эс ăслă сăмахпа вăратнă
Тăван çынсенĕн çутă ĕмĕтне,
Пĕр уншăн ырă юрăсем шăратнă,
Çунат эс хушнă унăн вăй-халне.

Пĕр çавăншăн сана манмарĕ халăх,
Утатăн халь те пирĕнпе пĕр тан.
Сана мĕн ĕмĕр-ĕмĕр асăнмалăх
Ларать çак палăк—çирĕп мрамортан.

Куран куçу пулсан, курасчĕ санăн
Кунтан Шупашкара та Атăла,
Туян чуну пулсан, туясчĕ санăн:
Халь пурнăç урăх, урăхла йăла.

Çуллен çӳле кармашăнать хуламăр,
Мăнаçлă Атăл анлăн сарăлать;
Кунта, хăй илемне пĕр çухатмасăр,
Сăвву та уççăн, ирĕккĕн янрать.

Сăртра кашлать чăваш вăрманĕ, хирĕ.
Хитре вĕсем хĕвел çутатнă чух.
Кунта çын савнăçлă, ĕçчен те ирĕк,
Такамшăн пĕрчĕ тар тумлатас çук.

Кунта телейлĕ çамрăксем курмаççĕ
Сетнерпеле Нарспийĕн асапне,
Хавас хĕрсем куç пек чечек лартаççĕ
Хăйсен таса юратăвĕ ятне.

Кунтан чăваш юрри-сăвви янрарĕ
Мĕнпур халăхсене илтĕнмелле.
Сан сăввусен те сивĕнми кăварĕ
Йăлтăртатса тăрать çуркуннелле...

Эп тарăн шухăша кайса тăратăп
Çак мрамор палăк умĕнче ялан.
Чăвашăн тĕттĕм ĕмĕрне куратăп,
Куратăп çутă кун-çулне—паян.